К С(Чув)
А 90
33162-чув

СВЕТЛАНА АСАМАТ

# Ăшă çил



Национальная библиотека ЧР
4-033162

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗ
обозначенного здесь срока

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |
| | | | | |

СВЕТЛАНА АСАМАТ

# ĂШĂ ÇИЛ

Сăвăсем

Шупашкар
Чăваш кĕнеке издательстви
1991

ББК 84 Чув 7-5
А 35

ПРОВЕРЕНО
20 10 ОКТ 2017

**Асамат С. В.**

А 35 Ӑшӑ ҫил: Сӑвӑсем.— Шупашкар: Чӑваш кӗнеке изд-ви, 1991.— 64 с.

Ҫамрӑк авторӑн иккӗмӗш кӗнекине лирикӑллӑ сӑвӑсем кӗнӗ. Вӗсенче ӑшӑ туйӑм выляса тӑрать, чӗрӗ шухӑш хӗлхемӗ ҫиҫет. Автор ирӗклӗ сӑвӑ еннелле туртӑнать, ҫав вӑхӑтрах фольклор традицине те манмасть.

**ББК 84 Чув 7-5**

**А** $\frac{\mathbf{4702710202-061}}{\mathbf{М\ (136)03-91}}$ **20—91**

ISBN 5-7676-0455-2

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1991

* * *

*Мĕн каласа юрлам-ши,*
*Мĕнле халап ярам-ши?*
*Чунăрсене уçса яма*
*Хăш юррине суйлам-ши?*

*Пĕлен мĕнпур юррине*
*Харăссăн юрлас килет.*
*Хут купăсран, чуна тивсе,*
*Кĕмĕл сасă çĕкленет.*

*Асаннесен юррисем*
*Кĕввипеле савăк-çке.*
*Мерчен евĕр сăмахĕсем*
*Шухăшĕпе тарăн-çке.*

*Ыр йăласем пуррине*
*Асра тытса пурнар-и?*
*Атте-анне юррине*
*Чунтан савса юрлар-и?*

# ШĂНАРЛАННĂ ХУНАВ

* * *

Мăйăрлăх, кăмпалăх,
Сарă çулçă.
Шĕшкĕлĕх, юманлăх,
Сывлăш уçă.
Тунсăхăм, хаваслăхпа пĕрле
Кĕвĕллĕ чăваш тĕрри тĕрле.

Тĕррĕм пултăр сăвă-юрăран,
Çак мăйăрлăхран, юманлăхран.
Пултăр вучахран, çĕртен, шывран,
Пучахран та ăшă çăкăртан.
Çĕр çинчи мĕнпур илемсенчен,
Çăлтăр çутинчен, чечексенчен.
Пулччăр тĕррĕмре çулсем-йĕрсем,
Кăпăр уявсем, хастар çынсем,
Тарăн кӳлĕсем те пĕлĕтсем,
Çăлкуçсем, ем-ешĕл вăрмансем,
Уйăхĕ, хĕвелĕ йăлтăртаттăр,
Хӳхĕм тĕрĕ таврана çутаттăр.

Маншăн кун çути тĕксĕмленсен,
Çул çиппи йĕпрен вĕçерĕнсен —
Пил сире, яшсем, хĕрупраçсем,
Ăнса пыччăр пуçăннă ĕçсем.

* * *

Дуэль...
Иртнин те паянхин—
Вуникĕ утăмĕ.
Икĕ енче —
Икĕ хăрушă вăй.
Хире-хирĕç
Икĕ тăшман.
Куçа-куçăн —
Тĕрĕслĕхпеултав.

Секундантсем
Пăшăрханаççĕ, пăлханаççĕ.
Енчен енне, хыçа, мала
Шикленерех пăхса сăнаççĕ.

Ир. Сывлăшра — нӳрĕк.
Сĕрĕмлĕ тĕтĕм пек
Çăра тĕтре —
Малашлăха пуснисенне
Хыпашласа пăхать урисене.
Кам çирĕпрех?
Икĕ вăйран
Çĕр тĕнĕлне хăшĕ
Тĕкĕлесе тăрать тĕреклĕрех?

Дуэль...
Тĕрĕслĕх тĕл лектерессе,
Ултава чăнлăх çĕнессе
Шанас килет.

* * *

Ырра ĕмĕтлентĕн. Çĕклентĕн.
Кĕрешрĕн. Çĕнтертĕн.
Пусмăрлăх çук. Çул уçă.
Талпăнтăн. Чупрăн.
Такăнтăн. Ӳкрĕн.
Уру çине тăрăттăн...
Чышрĕç. Юнарĕç.
Тарăхрăн. Чăтрăн.
Хуллен упалентĕн...
Кĕр вăрăм пулчĕ.
Хĕл сиввĕн кулчĕ.

Танмарлăх çук?
Намăса çĕтерсе,
Выçă чап хӳттинче
Хăшĕсен, тен,
Çитет иртĕхсе?
Самана чан çапать.
Тĕнчене янратса,
Чăнлăха сас парать.
Шартлатса пăр ванать!

Шăнăрланнă хунав!
Шăнса хытнă çĕртен
Çĕнетӳллĕн çĕклен.
Шалтан, тĕпрен,
Тымартан вĕрилен.

* * *

Ăçta эс, чун канăçĕ, ăçта?
Шыратăп,
Тупаймастăп-çке сана.
Ĕçре те тупăнмарăн, канура та,
Пулмарăн маншăн эс юратура.
Ĕçленĕçемĕн,
Ĕç ăнса пырсассăн,
Эп ывăна пĕлмесĕр тăрмашап.
Кану та маншăн —
Купăса тытсассăн,
Эп юрласа чуна усăлтарап.
Çĕр-аннепе мĕн пулĕ-ши,
Йăлтах ванса саланĕ-ши?
Çăра озон шăтăкĕнчен
Хĕвел çунтарĕ-ши Çĕре?
Аслăхран тухнă ăссăрлăх—
Нейтрон—тĕп тăвĕ-ши пире?
Çĕр чĕтренни, вулкан, тайфун,
Этемлĕх эрлĕк курасси
Миçе çул юлнă, миçе кун?!
Эп ĕненетĕп — çутă Çĕр
Хĕвелшĕн пулмĕ хăрхăм хĕр.
Канăçсăр шухăш чĕремре:
Нивушлĕ канăç вилĕмре?
Вилсен—çĕрессн çеç юлать?—
Вилĕм çынран лĕх-лĕх кулать:
«Çĕрсен те—хура çĕр пулса,
Выртаймăн канлĕн карăнса».
Ăçта эсĕ чун канăçĕ, ăçта?
Никам та калаймасть ăна.
Таçта...

* * *

Çырма хĕрри.
Çăлкуç. Вăрман.
Çеçпĕл, лантăш чечекĕ.
Тавралăх сыввăн ешерет.
Сывлăш — яр-уçă.
Сывлăшăн алăк çук,
Пуриншĕн те вăл уçă.
Пурăн, сывла.
Анчах юнашарах
Такамăн сывлăш пӳлĕнет.
Вăл ассăн-ассăн хашлатать.
Çак çутçанталăк илемне
Юлашки хут курса асапланать.
Кăçал вăл
Çулçă кăларма пултараймасть,
Вилет, хăрать.
Пĕрре пăхан та—чиперех пек.
Хуппийĕ айĕнче —
Кăткă чупать вĕтĕлтетсе,
Хуртсем йăшăлтатаççĕ.
Кăшлаççĕ майĕпен те выççăн
Суйласа илнĕ йывăça —
Хăйсем пурăнассишĕн.

Вĕсен те урăхла пурăнма
Май çук-шим?
Вăрман кашламасан,
Çак тăрă сывлăш
Пулмасса пĕлмеççĕ-шим?
Пĕчĕкскерсем, эшкер пулса
Парăнтараççĕ пысăк ăваса.
Килем те пуртăпа сулам!
Мăшкăлĕнчен, тен, хăтарам,
Ăвăсăма касса ярса?..

Çынсем те, хăшĕ-пĕрисем,
Хурт пек чакаланса çӳреççĕ.
Шăл витĕр ахăрса, сурса,
Çынна кăшлаççĕ те çиеççĕ.
Хăйсем çапах-ха хăйсене
«Эпир мĕскер, çын мар-им» теççĕ.

* * *

Ҫам — лайăх, ырă.
Ҫам — усал, чее.
Ҫампа пурне те ăшă.
Ҫампа — пурне те сивĕ.

Пурах пулсан
Çав чун тени,
Ăçта-ши, хăш тĕлте-ши вырнаçать,
Ăшра мĕн калăпăш вăл йышăнать?
Хăйне хăй вăй кĕртсе тăрса,
Миçе пин кăмăл çупăрлать?
Миçе пин туйăм çуратса,
Çын чĕринче вырнаçтарать?
Çын чăтайми телейĕ, хурĕ
Ăçта кайса пусăрăнать?

Ун чунĕ таса мар тесе,
Мĕн-ма çынран çын пăрăнать?
Е теприн пе ĕмĕрлĕхе
Хăй ĕмĕрне çыхса хурать...

* * *

Мӗн чухлӗ куççуль тăкăнать,
Чӗрем çавăн чухлӗ тулать.
Иксӗлмест, сивӗнмест.

Ачапа — ачалла,
Ватăпа — ватăлла вăл
Пулма пултарать.
Вăл теме те туять.
Вăл теме те чăтать.
Пулăшу кирлине
Пулăшма тăрăшать.

Чӗрем,
Хăй суйма пӗлменскер,
Суяпа тӗл пулсан,
Вăл епле тулашать.
Ятăма сыхлама,
Чысăма упрама,
Вăл—салтак пек тăрать.

* * *

Чунра темскер
Сухăрлă вĕлтĕрен пек
Вĕтĕлет те чĕпĕтет.
Ыйту çине ыйту
Черетленсе килет.
Уçать—кĕрет,
Тухать—каять,
Чун алăкне
Шартлаттарсах хупать.

Ăшра çăмха пек —
Кӳренӳ кусать.
Çăмхи кусса
Пĕчĕкленет те пулĕ,
Анчах...
Шухăш çиппи пăтрашăнать,
Хăшпĕр çĕрте
Салтмалла мар тĕвĕленсе ларать.

* * *

Ҫурайманлӑх — юратуран
Пӗр утӑмра, тет
Ваттисен сӑмахӗ.

Асӑрхануллӑрах, этем!
Савӑнӑҫна
Ытлашширех сапаласан—
Савӑнӑҫсӑр юлатӑн.
Хурлӑхна
Иртӗхтерсе ярсан —
Пушшех те канӑҫсӑр пулатӑн.

Ҫурайманлӑх — юратуран
Пӗр утӑмра, тет
Ваттисен сӑмахӗ.

Юратуран пӗр утӑм —
Ӑнланулӑхчӗ.
Сӳрӗклӗх мар,
Сив курайманлӑх мар.
Юратуран пӗр утӑм
Пур енне те —
Чунлӑхчӗ,
Чи ырӑ ҫынлӑхчӗ,
Ҫав курайманлӑх тупсӑмне
Тупма.

* * *

Хуть те камран,
Хуть те ăçта тарас тесен—
Таçта çити тарма пулать.
Пĕр кунлăха, пĕр çуллăха,
Яланлăха.

Анчах...
Таçти çĕре çитсе курсан та,
Тĕнче хĕрне пырса тăрсан та,
Хăвăнтан ху кăна —
Пĕр çуллăха та мар,
Пĕр кунлăха та мар,
Самантлăха та
Нихçан, ниçта та тарас çук.
Мĕн пур санра—
Санпа пĕрле
Мĕн виличчен çак тĕнчере.

Ырă тусан — ырă сăмах,
Усал тусан — усал сăмах
Çын асĕнче тăрса юлать.
Вилсессĕн—хыççăмах пулать.

# ПУҪАНЕ

Тӗрлӗ-тӗрлӗ халӑхсен
Пӗр-пӗринпе калаçма
Хаклӑ тăван чӗлхе пур.
Савнӑ чӗлхе çеммипе
Пепкисене йăпатма
Лăпкă сăпка юрри пур,
Хитре пуканийӗ пур.
Сарӑ мăшăр çивӗчӗ
Икӗ тулли кӗлте пек.
Илӗртӳллӗ сăн-пичӗ
Чечен мăкăнь чечек пек.
Ҫӗпи арки тӗрӗллӗ,
Тухйи чӗлтӗр кӗмӗллӗ.
Пушмакӗ те кӗлеллӗ,
Вуник çутă тӳмеллӗ.
Саппунӗ шерепеллӗ.
Ахах-мерчен шевлеллӗ.
Ҫапăр тумне вӗçлеме
Ҫăкăр умне — шӳлкеме.

Нарспи-ши ку, Пинерпи,
Е сăпайлă Салампи,
Эмине, Чӗкеç, Верук?
Хуть те темле ят парсан та—
Чăваш пики—Чиперук.

* * *

*В. К. Кузьминана*
кӑрлачӑн 22-мӗшӗ, 1987 ç.

Мӗншӗнех-ши кайрӑм вӑрмана?
Хӑмла çырли татас терӗм-ши?
Хӑмла çырли пухӑнмарӗ те,
Хурӑн çумне тӑрса хурлантӑм,
Çырласӑрах киле таврӑнтӑм.

Мӗншӗнех-ши кайрӑм улӑха?
Мӑкӑнь чечек пухас терӗм-ши?
Мӑкӑнь чечек курӑнмарӗ те,
Курӑк çине ларса кулянтӑм,
Чечексӗрех киле таврӑнтӑм.

Мӗншӗнех-ши тухрӑм çак вӑййа,
Чун варлине курас терӗм-ши?
Чун варлине кураймарӑм та
Йӑмра айне ларса макӑртӑм,
Киле каллех пӗччен таврӑнтӑм.

## ШКУЛ ÇУЛĔСЕМ

Çатма пек такăр сукмакпа
Çулла—чупаттăмăр,
Кĕрт хӳсе кайнă урампа
Хĕлле—ашаттăмăр,
Пылчăк çăраттăмăр
Хура та сивĕ кĕркунне,
Шывра утаттăмăр
Сĕлкĕшлĕ юрлă çуркунне.
Вăрманпала та уйпала
Васкаттăмăр тăван шкула.

Вăй пухрăмăр, çын пултăмăр,
Пурнăçра тем те куртăмăр.
Йӳççийĕ çӳçентерчĕ,
Пылакĕ тĕлĕнтерчĕ.
Йӳççипеле — йӳçмерĕмĕр,
Пылакпа — ирĕлмерĕмĕр.

Шкул çулĕсем асрах, асрах,
Шкулта мĕн илнĕ, çав ăсрах.

* * *

Хăвăрт
Иртсе каять-çке пурăнăç,
Пĕр талăк пек.

Тĕттĕмлĕх.
Шуçăм çути,
Ир сулхăнĕ.
Хĕвеллĕ, çумăрлă,
Чечеклĕ кун илемĕ.
Кăнтăр.

Анăç хĕрелни,
Каç сулхăнĕ,
Шăпчăк сассиллĕ ĕнтрĕк,
Уйăхлă, çăлтăрлă тӳпе,
Ак, çурçĕр çитрĕ те...
Каллех тĕттĕмлĕх.

Пĕр талăк пурăнăç та
Сахал мар иккен,
Пĕр шутласан.

33162гув
Чувашская Республиканская библиотека

* * *

Ҫуҫсем, куҫсем...
Вĕсем чи тарăн ҫăлкуҫсем.
Анчах та
Куҫ-ҫăлкуҫ пĕр хупăнсан—
Текех уҫăлаймасть.

Куҫсем, куҫсем...
Вĕсем чи ҫутă ҫăлтăрсем.
Анчах
Куҫ-ҫăлтăр пĕр сӳнсен—
Тек ҫиҫеймест.

Куҫсем, куҫсем...
Вĕсем чи ҫепĕҫ чечексем.
Анчах та
Куҫ-чечек тĕксĕмленсен—
Текех йăлкăшаймасть.

Пурăннă чух —
Ҫăлкуҫ тасалăхĕ,
Ҫăлтăр ҫути,
Чечек илемĕ пек пуласчĕ
Пĕр-пĕриншĕн.

## ÇУМĂР

«Çумăр çăвать, тур парать,
Çитăр пичче хĕр парать».
Çумăр айĕнче тăратăп,
Алă çупса сăвăлатăп.

Çу, çумăр, çу, çумăр, çу.
Сăваплă санăн пурнăçу.
Сана кĕтсе ĕшеннĕ курăк
Санпа пĕрле ташша çапать.
Утмăлтурат, пĕтнĕк, хупах,
Сарпуç, пучах пуçне таять.
Ав, çырмари хур-кăвакалĕ
Çунат çапса шыва чăмать.
Ачи-пăчийĕ урамра
Çара уран сиксе чупать.
Шăлсăр мучи килкартинче
Витре хăлăпĕпе шаккать.
Ун карчăкĕ чӳречерен
«Ан ухмахлан» тесе юнать.

Çумăр çăвать!

* * *

Паян-ыран
Кĕтмен çĕртен
Инкек килсен,
Паян пуранна çын
Ыран вилсен...
Тем чухлĕ ĕç ун
Çĕр çинче тарса юлать.
Тем чухлĕ шухăш-ĕмĕчĕ
Тăпра айне пулать.

Паллах, йăх тăсăлать.
Пĕрин ĕçне теприйĕ пусăнать.
Анчах тепри — эс мар,
Эс кайнă сĕмлĕх тĕнчине.
Этемлĕхшĕн туса хăварнă
Ху мĕн тума пултарнине.
Пире халалласа хăварнă
Ху мĕн тума ĕлкĕрнине.

Суялăх вĕçĕ — тĕрĕслĕх.
Тĕрĕслĕхрен асли мĕн пур?
Пурăнăç вĕçĕ — вилĕм.
Вилĕмрен вăйлă вăй та пур.
Ĕçе юрат.
Ĕç тымарланнă,
Туратланнă несĕл пулса
Еткер аксан —
Чунри элкер ялкăшатех.
Çитес ăру çамрăкĕсем
«Аван-и, тус-тăван» тесе
Пĕр-пĕринпе ал тытĕçех,
Пĕр ывăçри
Пилĕк пÿрне пек,
Пĕрне-пĕри ăнланĕçех.

* * *

Аннем,
Эпĕ яла часах пыраймасан,
Мана сан
Çав тери курас килсе кайсан—
«Қантăр кӳлли» патне
Васкавлăн кайса кил,
Маншăн та, хăваншăн та,
Çăл шывне
Виç сыпкăм сыпса ил.
Ан кулянсам,
Пурнатăп чиперех,
Мĕн кирлĕ —
Пурте пур, çителĕклех.
Хăвна кăна сыхла,
Мана эс
Пуринчен те кирлĕрех.

Қурсам, анне:
Çăлкуçĕ сан çине сăпайлăн
Ман куçăмпах савса пăхать.
Илтсем, анне: çăлкуç
Ман сассăмпах шăнкăртатать.
Валак çинчен валак çине
Хĕпĕртесе сике-сике,
Çăлкуç çути, куçне хĕссе,
Ман кулăпах йăлтăртатать.
Аннем, аннем!
Çавăнта кай та ларса кан,
Манпа тĕл пулнă пек лăплан.
Эп хам та тунсăхлă паян.

* * *

Юманлăхра
Чармак турат
Ик аллăма кушак чĕрни пекех
Чăрмаласа пĕтерчĕ.
Чăрмав турăм пулас,
Айăп пур-ши?
Хуçса пăрахăттăм тарăхнипе —
Шеллерĕм.

Сукмаксăр тулă пуссипе
Хир урлă утрăм килелле.
Таса уйра сĕнксе ларать
Хăр-тăлăх хăвăл хăмăл.
Вăл та пулин ик урана
Мăка сава пекех
Чĕрпеклесе пĕтерчĕ.
Тăпăлтарса перес тарăхнипе—
Шеллерĕм.

Илтетĕп, чĕрĕ сывлăшран
Пĕр калаçу ăша кĕрет.
Чĕрене йĕп пек тирĕнсе,
Ыраттарса чĕрет, чĕрет...
Турат пăшăлтатать:
«Э-эй-яй-яй...
Ăçта эсĕ,
Сар ывăлăм —
Йĕкел?»
Хăмăл хăшăлтатать:
«Э-эй-яй-яй...
Ăçта эсĕ, пуçтах хĕрĕм —
Пучах?»
«Аякра мар эп, Çĕр çинчех,
Ыр çутçанталăк пӳлминчех.

Тепĕр çултан, тем пулмасан,
Килетĕпех, çитетĕпех.
Тăвансене эп хам çинчен
Пĕлтерĕпех, систерĕпех...
Килеймесен — килмесп вара,
Ун чух эп—Çĕр çинчи тăпра».

* * *

Сана кам та пулин
Ман çинчен усалпа каласан—
Хăть ĕнен, тĕлĕнсе итлесе,
Хăть тĕртсе яр, суя ку тесе,
Эп çавна пурпĕрех пĕлес çук.

Хура çӳç пĕрчисен хушшинче
Шурă çӳç пĕрчисем хутшăнаççĕ.
Пурнăçра, юлташсем, тăшмансем,
Пĕр пекех, юнашар пурăнаççĕ.

* * *

Наян — наянланса пурăнать,
Нăйкăшать.
Тарăхсах пурнăçа вăрçать.
Ĕçчене ятлать.
Пăлахая персе пурăннишĕн
Хăйне мар,
Пĕрмаях такама
Айăплать.

* * *

Пӗлӗт айӗнче,
Ӑавак Ҫӗр ҫинче—
Ҫуртсем.
Пӗчӗк пӳртсенче,
Пысӑк ҫуртсенче—
Ҫынсем.
Ҫын ӑшӗнче,
Ҫын чӗринче—
Ӑшӑ туйӑмсем,
Ырӑ ӗмӗтсем.
Ах! Усал шухӑшлӑ
Ҫын та пур.

Пӗлӗт хушшинче,
Тӗнче варринче —
Хӗвел.
Хӗвел ҫутинче,
Пирӗн Ҫӗр ҫинче—
Телей.
Хӗвелӗм, ҫун.
Ӑил, сарӑ кун.
Юхчӑр юрӑсем—
Чи хаваслисем.
Ах! Пурнӑҫра
Хура кун та пур.

* * *

Ним тумасăр лариччен
Хăвăртрах, каç пуличчен,
Анкарти хыçне тухам,
Вăрмана кĕрсе курам.

Паçăрах пĕр уçă сасă
Ĕшнене чĕнет, кĕтет.
Сĕрме купăсăн, шăхличĕн
Йыхăрать те илĕртет.

Çутçанталăк шăппăн-шăппăн
Шăпчăк юррине тăнлать.
Ӳхĕ, тăмана та карăш
Сас памашкăн вăтанать.

Сулхăн. Ҫанлĕ. Утнăçемĕн
Малаллах утас килет.
Каснă йывăçа куран та—
Чунăм чĕтресе илет.

## СИРЕ...

Ĕçсĕр пĕр кун та иртмест,
Ан та ирттĕр.
Ĕçлĕ пулма
Ĕмĕрнех вăйăр çиттĕр.

Ĕçсĕр ларма вăхăт çук,
Ан та пултăр.
Ырӑ ĕçре ырӑ çын
Ырӑ куртăр.

## ПУРНĂÇ

Тăват енне уçнă кантăкран
Тăват енлĕ инçет курăнать.
Эпир утса кĕнĕ алăкран
Эпир тухса каяс çул выртать.

Шăпа сасси евĕр—чан сасси,
Манăн каясси, сан—юласси.
Шăпа сасси евĕр—чан сасси,
Эпир ĕмĕр уйрăм пурнасси.

* * *

Шывармань-и эс
Е çил арманĕ,
Чун-чĕрем?
Тĕрлĕ шухăш авăртан
Самантсерен.
Айăн-çийĕн
Авăр пек пăтрашăнан.

Тӗлсӗр ҫил пек
Урӑм-сурӑм тулашан.
Е хӗвеллӗ кун пек—йӑлтӑр!
Е эс ӑмӑр. Пурте пултӑр.
Пурте пултӑр, пурте пултӑр.
Чун тени вӑл тем те куртӑр.

Пуҫӑмра — ҫӳҫеллӗ тутӑр,
Ҫӳҫине ҫил вӗҫтерет.
Мӗн вырӑнне мана хутӑр?
Тӗрӗсне кам пӗлтерет?

Ҫил арманӗ, шыв арманӗ,
Ал арманӗ авӑртать.
Арман чулӗн ҫивӗч шӑлне
Шӑйра-шӑйра мӑкатать.

Арман йывӑр ҫуначӗпе
Тӳпенелле туртӑнать.
Пӗр ҫӗкленсе, пӗр кукленсе,
Ҫӑнӑх сапса, хывӑх сапса,
Шыва, ҫиле чӳк тӑвать.
Кӑштӑртатса ҫаврӑнайса,
Ҫавра юрӑсем хывать.

Ҫын ӑшӗнчи тӗнчере те
Ҫитмӗл ҫичӗ вӑй вылять.
Ҫын ӑшӗнчи тӗнчере те
Чунармань кӑлтӑртатать.

# СЎННЕ КĂВАЙТ ĂШШИ

* * *

Ыран çумăр çăвасса-ши
Сĕт кăпăкланать?
Çил ачи вĕçсе килет те
Тек пăшăлтатать:
«Сулхăн, каç енне кайсассăн
Тăхăн ăшăрах.
Ан кĕттер, васка,
Тусу сан
Килнĕ паçăрах».

Эс чĕнетĕн, эс кĕтетĕн,
Кĕтнĕшĕн тавах.
«Эпĕ те сана саватăп»—
Чăтăмлă сăмах
Кайăк пек вĕçсе тухасшăн
Чунăм-йăваран.
Юрă-сăвăра янрасшăн
Сан умна тăрсан...

Ыран çумăр çăвасса-ши
Сĕт кăпăкланать?
Ман тута хĕрри чĕтревлĕн
Сан ятна калать:
«Сĕт пек сиплĕ сăмахсемшĕн
Тав сана, тавах.
Сĕт ăшши пек кăмăлупа
Сав мана татах».

* * *

Пăрлă Атăл.
Лăпкă хырлăх.
Хĕл пуçламăшĕ.
Сивĕ пулсан та,
Эс юнашар пулнипеле
Чунра — вĕри.
Сип-сивĕ юр çинче
Тăвата енчен чĕртнĕ
Вут çунать.
Хушшăмăрти калаçура:
Ачалăх, яшлăхăм,
Ытти çулсем...
Кăшт иртерех
Иленнĕ ватлăх
Ачалăхран та
Ачашрах пек туйăнать.

Юр ирĕлнĕ çĕртен
Сип-симĕс мăк
Куçран тинкерчĕ тĕлĕнсе.
Кăвайт хĕлхемĕ пек кĕрен,
Юрпа витĕнеймен
Кĕтмел çырли кулса пăхать
Чиперкке чăрăш айĕнчен.
Тататăп, тутанатăп,
— Тусăм, эс те тутан.

Пĕлетĕн-и,
Сана пĕрре курсассăнах
Хĕмлентĕм те,
Çунатăп халĕ те—
Майĕпен те лăпкăн, çӳллĕн.
Хыр пек кĕрнеклĕ кӳлепӳ
Сывлăхлă пултăр.

Ҫăвайтăмăр ан сӳнтĕр,
Ҫунтăр, ҫунтăр.
Сӳнес пулсан — иккĕн
Харăс сӳнсен те ним те мар.
Шăнас пулсан кайран —
Ҫак вучаха аса илер те —
Ăшăнар.

* * *

Сисмен ҫĕртен тăм ӳкрĕ,
Шăнтрĕ, пăрлантарчĕ.
Тин ҫурăлма пуҫланă ҫеҫкесем
Куҫне уҫса та кураймарĕҫ.

Сан ҫырăвна
Вилес пек кĕтрĕм.
Кĕтсе илсессĕн —
Вилтĕм, пĕтрĕм.
Ăшчик пăрланчĕ.
Чечек-чĕрем
Тăм тивнĕн пăчăртанчĕ.

Юмăҫ яни халь мĕн усси?
Ҫама мĕн чухлĕ —
Нумайрах е сахалрах —
Асапланса пурăнасси?
Ман айăпăм — ĕненнинче.
Сан пур-ши айăп суйнинче?

* * *

Вĕри куççуль тумламĕсем
Чечек пулса шăтас пулсан,
«Ай-яй, ытла хитре!»—тесе
Асăрхăттăн эс вĕсене.

Куççуль — куççуль те,
Ним те мар.
Юхтăрин, мĕн вăл,—
Ейӳ мар,
Çыранĕнчен тухса каймасть.
Юхтăрин, мĕн вăл,
Çумăр мар,
Пĕвесене татса каймасть.

Саншăн йĕрсе, пĕлетĕн-и,
Куçран куççуль те тухми пулчĕ.
Чăнах-шим çав шăпа тени
Пирĕн çине аллипе сулчĕ?

Асса пĕтернĕ çăлкуçсем
Типеççĕ, çĕр çинчен çĕтеççĕ.
Аснишĕн мар, сурнишĕн пуль,—
Тек ăсăнас темеççĕ.

* * *

Тӳртен кайма пулать,
Эп тавраран çӳретӗп,
Сан кантӑк çутине курас тесе.
Тӳртен кайма пулать,
Эп тавраран çӳретӗп,
Эс утакан çулпа утас тесе.

Ывӑнтӑм.
Ывӑннине кӗпене хывнӑ пек
Перӗттӗм те хывса
Кайӑттӑм çӑмӑллӑн чупса.
Ӑçта?
Вӑхӑт — хуçа, вӑхӑт — хуçа,
Пурне те хӑварать хыçа.

Сунтал çинче туптаннӑ
Тимӗр хӗмӗ пек
Чӑлт! сирпӗнчӗ те,
Вӗлт! — ав,
Ӗмӗрсен вӗçевӗнче,
Саккӑрмӗш пӗлӗт тӗтринче
Пӗр пурӑнӑç инçе-инçе-е-е...

Унпа пӗрле—тавра çулсем,
Сан тӑвӑр кантӑк çутисем.

* * *

Çĕр çухрăм аякра... пулсан та
Мана эс ун чухне
Çав тери çывăхчĕ.
Аллăмăрсем, тутамăр
Хушшинче капланнă
Йывăр сывлăша сире-сире
Эс аякран васкаттăн ман пата.
Эп — сана хирĕç.
Ик тĕнчерен
Пĕр тĕнчене куçаттăмăр.
Хусканура, калаçура
Çĕнĕ тĕнче уçаттăмăр.

Çӳлте, эпир пĕрле чухне,
Хĕçĕсемпе хĕм çиçтерсе
Усалпа Ырă
Çапăçатчĕç çĕрĕпе.
Теме асăрхаттарнăн
Асанне пекех
Тӳпе кăмăлсăррăн
Мăкăртататчĕ.
Е хыттăнах вăрçатчĕ,
Шалкăм куççуль тăкатчĕ.

Ах, пурте пире хирĕç,
Çынсем те, çутçанталăк...
Кам пире майлă?
Юрату çеç пуль тенĕ.
Халь эсĕ çывăх,
Таçта юнашарах çӳретĕн.
Анчах чунăмăрсен
Туйăмлăх туртăмĕ имшерчĕ,
Сĕртĕнӳсен вĕрилĕхĕ
Ашăнайми сивелчĕ.

Тĕнче варри ишĕлчĕ-им,
Шырав иксĕлчĕ-им?
Хушшăмăрта
Çĕр çухрăм мар иккен,
Çич ĕмĕрлĕх
Ăнланайми инçет.
Тĕлпулусем ман куç умне
Тухса тăраççĕ ретĕн-рет.
Çăмăл е йывăр вĕсене —
Ăна чĕре кăна пĕлет.

Ах, пурпĕрех—сисетĕпех,
Усалпа Ырă хушшинче
Тăрса юлатпăр варринче.

Те хамăр
Улталарăмăр Юратăва,
Те вăл — пире?

* * *

Шурă кĕпе аркине
Мĕнле çиппе тĕрлем-ши?
Санпа утнă сукмаксене
Пĕччен мĕнле йĕрлем-ши?

Ăвăс йывăççи çине
Улăхăттăм—турат çук.
Чăнкă ту çинчен пăхсан та,
Эс килессе курас çук.

Тĕкĕр çинче тĕлĕк куртăм:
Эсĕ манпа юнашар!
Тĕлĕкре пĕрле пулсан та,
Пурнăç иртрĕ уйрăмшар.

* * *

Эп асамçă пулас пулсассăн—
Хĕл кунĕнчен
Паян тесен паян
Çу кунĕ тăвăттăм.
Юмахри пек,
Шур урхамах çине ларса,
Хир-вăрман урлă
Çил пек вăркăнса,
Сан умна тухăттăм.
Çаран çинче çара уран
Чупса çӳрес килет санпа!
Е çавă самантрах
Çу кунĕнчен
Хĕл кунĕ тăвăттăм.
Çĕнĕ çул умĕн юмахри пек
Вĕçтерсе пырăттăм та,
Юрпике пулса,
Сана çĕр варринчех
Вăратса тухăттăм таса уя.
Шур уйăх çутинче
Ман юнашар утас килет санпа!..
Асамçă мар эп,
Пурнăç — юмах мар.
Çапах сана аса илме
Çу кунĕ те, кĕр кунĕ те,
Хĕл кунĕ те, çур кунĕ те,—
Пур асăмри инçетлĕхре.

* * *

Улма чăпар утне, ăшчик тулсан,
Ёшениччен чуптартăм, хăваларăм.
Вăл тулхăрса ярса пуçне уссан,
Тилхепине пушатрăм та лăплантăм.

— Мĕн пулчĕ-ха, мĕн пулчĕ-ха сана,
Туйăмçăм-утçăм, мĕншĕн асаплантăн?
— Яр ирĕке, тек ан кăкар мана,
Пĕлмен çулпа ан хăвала мана...

— Ан ĕрĕхсем,
Çул мар-çке сан умра,
Хăвах куран, çул мар.
Ешĕл калча ани ку.
Таптар мар.

* * *

Тĕкĕнсенех — ўкетĕп.
Ўкетĕп те пĕтетĕп!
Сана курнăранпа эп саншăн —
Кĕрен чечек çинчи
Вĕри, пылак тумлам.
Кĕрхи кунсем çитсен,
Чечекĕ те типет,
Тумламĕ те ўкет.
Ўкерессў килсен —
Ўкер ал тупану çине.
Ĕçес килсен —
Пĕр сыпкăм ту
Вĕри туту хĕррипеле.

* * *

Эп сансăр — куçсăр мар,
Куратăп,
Хура-шурра чухлатăп.
Элле
Сана курас килнипеле
Йĕре-йĕрех
Суккăрланатăп пуль.

Эп сансăр — алсăр мар,
Ĕçлетĕп,
Çăмăллăн ним те пулмасса
Пĕлетĕп.
Элле
Сана ытамăма кĕтнипеле
Йĕре-йĕрех
Вăйсăрланатăп пуль.

Эп сансăр—сумсăр мар,
Эп чиперех пурнатăп.
Чăн-чăн юлташăм пур,
Çумрах—тус-тăвансем.
Элле
Сана савас килнипеле
Йĕре-йĕрех
Çĕре кĕретĕп пуль.

* * *

Санпа тĕл пулнă кун
Эп шурă кĕпепеччĕ.
Шурă çинче —
Кĕрен çеçкеллĕ чечексем.
Сана курсан,
Вăшăл çилпе хускалнăн
Хумханса илетчĕç те вĕсем —
Хама та ун чухне,
Хуракăш пек,
Тӳпенелле вĕçсе каяссăн туйăнатчĕ...

* * *

Вăрман
Çырласăр пулать-и?
Эпĕ сансăр —
Çырласăр вăрман.

Çаран
Чечексĕр пулать-и?
Эпĕ сансăр —
Чечексĕр çаран.

Вăрлăхсăр
Тырă шăтать-и?
Эпĕ сансăр —
Пуса пучах.

Кĕвĕсĕр
Юрă пулать-и?
Сансăр эп —
Сассăр юрă.

* * *

Шатăртаттарах, аслати,
Шатăртаттар.
Пĕрер-пĕрерĕн, умлăн-хыçлăн
Пăрах çӳлтен аялалла
Вутпуççисем, урса кайса.
Кĕмсĕртеттер те кĕрслеттер —
Пурпĕр илтместĕп эп сана.
Савни çумне пăчăртанатăп,
Ăшпиллĕ сăмахне тăнлатăп.

Ай, çӳл тӳпе! Эй, çӳл тӳпе!
Халь-халь сăхас пек çĕленле
Ан кармашсам çиçĕмпеле —
Пурпĕр курмастăп эп сана.
Куç шăрçинче — савни кăна.

Ăçта çӳрерĕн, чĕмсĕр яшлăх?
Вăтанчăклă, кăвар ачашлăх
Пытантăн вăрттăн хăш тĕлте,
Çак таранччен таçти çĕрте?

Çу, çумăр!
Çумăр айĕнче,
Çил, аслати кĕрлевĕнче,
Хĕреслĕ çиçĕм çутинче —
Эп чун савни ытамĕнче.

* * *

Эс ыталанӑ пӗвӗме
Урӑххине тӗкӗнтерес килмест.
Эсӗ чуптунӑ тутама
Урӑххине сӗртӗнтерес килмест.
Эс килӗштернӗ сассӑмпа санах
«Савни» теес килет.
Санпа юрланӑ юррӑма татах
Санпах юрлас килет.
Пӗри мана:
«Суян, суян»,—тесе вӑлтать.
Тепри: «Ан сӳпӗлтет,
Пурнӑç иртет»,— тесе кулать.
Хӑйпе пӗрле çӑлтӑрлӑха вӗçме—
Пур чӗнекен.
Савмасӑр савӑшма, ухмахланма,—
Пур çав кикен çырли те сӗнекен.

Уйрӑлтӑмӑр.
Кӳренӗвӗм — çукпа пӗрех.
Тӗрӗс. Эпир
Пӗрне-пӗри улталаман.
Шӑпамӑрсем те
Тӗл пулса улталанман.
Тупӑнайман эпир иксӗмӗршӗн,
Тупӑнайман,
Тупӑнаяс тесе çине тӑман.

* * *

Чие пахчи çиçет,
Çырли пиçет.
Кĕтет пире, чĕнет,
Хăна пулсамăр тет.

Пĕр тĕм...
Шап-шурă çеçкере—
Тĕлĕнмелле!
— Айван,
Ма кĕр енне кайсан
Çеçке çуран?

— Кая юлса пулсассăн та
Хĕл лариччен, юр ӳкиччен,
Черчен туратăм хăриччен
Пĕртен-пĕрех çиçсе тăрам!
Çырла пулма май çук пулсан та,
Чечекĕмпе хăть савăнам...

* * *

Паян та,
Ĕнерхи пекех,
Вăрăм çӳçĕм
Питĕме сĕртĕне-сĕртĕне
Қаллех сан çинчен
Асилтерчĕ.

Сан ачаш пӳрнӳсен
Ăшă сĕртĕнĕвĕ,
Хĕм туту пăшăлтатăвĕн
Вĕри сывлăшĕ —
Қашни çӳç пĕрчинче
Халиччен манăçми упранать.
Асаплантарать.

Çитет.
Çивĕте касрăм.

* * *

Ан чĕн мана,
Чĕнсен —
Чупсах, тен, пырăп.
Час васкаса çитсен —
Асап та курăп.
«Савать мана» тесе,
Хама хам суйăп.

Чĕнсен —
Астăн çĕтсен —
Вутра та çунăп.
Çунса хевтем пĕтсен—
Шыва та путăп.

Телей-и ку?

Ан чĕн мана.
Кайран —
Тăна кĕрсен,
Пулса юлас килмест
Пăрлак шывра сӳнтернĕ
Хура çунăк.

* * *

Уйӑх ҫутатать-и, ҫутатмасть-и,—
Ҫутатмасан, ман мӗн тӑвас пур.
Эп сана савсан та, савмасан та,
Мансӑр пуҫне камӑн мӗн ӗҫ пур.

Тӗксӗм пӗлӗт тӳпене карсассӑн,
Йӗпхӳ витӗр ним те курӑнмасть.
Йӗпхӳ евӗр куҫҫуль тӑкӑнсассӑн,
Ырӑ кун курассӑн туйӑнмасть.

Аттеех те пахчи, улма пахчи,
Шӑнса хытрӗ, пӗтрӗ сивӗпе.
Аннеех те хӗрӗ, аслӑ хӗрӗ,
Мӗн курӗ-ши тӑнӗ-ӑсӗпе?

Ывҫи-ывҫи хурӑн ҫырли татрӑм,
Хутӑм вӗрене ҫулҫи ҫине.
Шухӑшӑмпа хамӑн ыйха татрӑм,
Ӳкрӗм ахлатса минтер ҫине.

Пахчи-пахчи чие, улмуҫҫи те,—
Ҫимӗҫ памасассӑн мӗн усси?
Йывӑҫ ҫулҫи йывӑҫ вулли май,
Утса каяр, тусӑм, ҫула май.

Ах, мӑнтарӑн кайӑк, сарӑ кайӑк,
Юрлать, юрлать—сасси тытӑнмасть.
Ах, мӑнтарӑн савни, ӑш ҫунтармӑш,
Пӑхап, пӑхап — килни курӑнмасть.

Ӳкрӗ, ӳкрӗ, шурӑ хурӑн ӳкрӗ —
Ӳкиччен вӑл ахлатса илет.
Ҫутҫанталӑк панӑ ӗмӗр иртрӗ —
Ман татах та пурӑнас килет.

Кĕрен çеçке татса савăнар-и?
Уншăн сирень кăкран хуçăлмасть.
Хире-хирĕç тăрса юр юрлар-и?
Юрламасан чунăм çырлахмасть.

* * *

Юрă-кулă эрни — çăварни,
Хĕл Мучин чи хаваслă парни.

Кӳлнĕ айăр сиксе кĕçенет,
Тăвалла тулхăрса вирхĕнет.
Тӳремре сиккипе ыткăнать,
Шухă çил шăхăрайса юлать.
Юр вĕçет, çил вĕçет,
Чун вĕçет. Вĕçĕ çук.
Сарлака-çке инçет.

Ут юртать, çуни меллĕн шăвать,
Çамрăк мăшăр телейлĕн кулать.
Сарнă улăм ванать, вакланать,
Ман савни авланать.
Кам уйра ӳлесе макăрать?
Йӳçĕ, йӳçĕ куççулĕн йӳççи!..
Кам туйра ăмсанса кăшкăрать:
«Йӳçĕ, йӳçĕ!..»
Çара хулпуççи...
Хулпуççи çине алă ӳкет...
Кăварланнă тута тĕлкĕшет...

Иртсе кайрĕ иккен çăварни,
Ман савнин — туй эрни.

* * *

Савниçĕм! Улăпăм!
Сан ятупа ман чунăмри
Биотоксен хĕлĕхĕсем
Тĕкĕнмесле хĕртĕнсе кайрĕç.
Ҫилсе кайма ерçеймесен,
Сассупала пĕлтерсе тăр
Мана хăв пурнăçу çинчен.

Хĕвел ӳте хĕртет,
Эс — чунăма.
Ҫăлкуç ăша уçать.
Эс — кăмăла.
Пĕлсем: сан ăшшуна кĕтсе
Кӳтнĕ чĕрем
Сансăр пуçне нимĕнле ют вăя
Парăнас çук.

Енчен мана
Курас та килмесен —
Сивĕ салам ямашкăн
Ан ӳркен.

Вара ĕмĕтĕмсем —
Аманнă чĕкеçсем,
Ĕлĕкхиллех
Ҫӳле вĕçме хăтланĕç...
Чĕре таппин кĕрен хĕлĕхĕсем
Хăйне хăех шупкаланса лăпланĕç.
Эп пĕлнĕ малтанах.
Сана асăрхаттарнă тахçанах.
Хăшпĕр çынсем
Мĕн чухлĕ çывăхрах,
Ҫавăн чухлех
Пушшех аяккарах.

* * *

Уяр пулса уя тухса вĕçем-и,
Шăпчăк пулса хамăр сада кĕрем-и?
Шăнкăр шывĕ юхтăр шăнкăртатса,
Ялваррипе ирттĕр юрласа.

Çӳллĕ-çӳллĕ çăлтăр çинче çутă пур,
Кӳршĕ ялта çутă сăнлă каччă пур.
Шăнкăр шывĕ юхтăр шăнкăртатса,
Ялваррипе ирттĕр юрласа.

Савни, сана виçĕ сăмах калам-и,
Вăй картине санпа çумăн тăрам-и?
Шăнкăр шывĕ юхтăр шăнкăртатса,
Ял варрипе ирттĕр юрласа.

* * *

Пушă.
Пылĕ типнĕ карас пек
Пирĕн чунсем — юратусăр.

Хăрăк.
Шывсăр типнĕ валак пек
Пирĕн чунсем — савăшусăр.

* * *

Шăмшак шăтăртатса ыратиччен
Юрат мана
Вĕри ытамунта.
Сывлăш пӳлĕниччен,
Тутам шыçса хĕреличчен
Чупту мана эс антăхса.
Ӳтрен юна,
Юнран—чуна
Хыпаланса кĕрсе
Пурăн манра
Пурăнăç пек хĕпĕртесе,
Пурăн манра
Хăв ĕмĕрне ĕмĕрлесе.

Вилсессĕн эп —
Чи юлашки сывлăшăмпа
Ман ăшăмран тухса,
Ăшă юхăм пулса çӳре
Çут уçлăхра.
Лăпкă çилпе кил вилтăпри çине,
Ачашлама кĕрен чечексене.
Ăш çумăрпа кил вилтăпри çине,
Куççуль пек сăрхăн
Ман шăмшак патне.

* * *

Ылтӑн ҫӗрӗ парнелерӗм
Ылтӑн ҫыннӑма.
Юрату палли вӑл терӗм,
Пултӑр асӑнма.

Халӗ,
Уйрӑлса кайсассӑн,
Мӗн тӑван унпа?
Чӗрӗ мар вӑл —
Кӑшкӑраймӗ,
Ан хӑра сутма.

* * *

Вӑрман. Чӑтлӑх.
Эпӗ ҫӗтсе кайнӑ.
Юнашар — никам та,
Кайӑк сасси те ҫук.
Кӑшкӑрса сас парсан—
Тен, ҫӑлӑнӑҫ тупӑнӗ.

Хула. Ҫынсем.
Эп вӗсем хушшинче—пӗччен.
Юнашар такам та пур,
Ҫынсенчен пӗртен-пӗри —
Чунри —
Ҫумӑмра ҫук.

Ун ятне кӑшкӑрса,
«Кил» тесе йӑлӑнма
Хӑяймастӑп.
Ун ятне хам ӑшра
Кӑшкӑрни те темех.

* * *

Пӗр кӗтесе кӗрсе тӑрса
Чун каниччен йӗрӗттӗм.
Анне «мӗн пулчӗ» тесессӗн,
«Ан кулянсам» тейӗттӗм,
«Эп хурланса макӑрнинче
Айӑпу ҫук» тейӗттӗм.

Аттем «мӗн пулчӗ» тесессӗн,
«Ан пӑшӑрхан» тейӗттӗм.
«Макӑрӑп та чарӑнӑп-ха,
Ӑшна ан ил» тейӗттӗм.

Тусӑм «мӗн пулчӗ» тесессӗн,
«Каях, каях» тейӗттӗм.
Куҫҫулӗме ҫӑтса ярса,
«Телейлӗ пул» тейӗттӗм.

* * *

Мăйăр хăрăкне пĕлес-тĕк,
Пĕр курланкă татмăттăм.
Савни суеçне пĕлес-тĕк,
Яхăнне те ямăттăм.

Эс кĕтмессе пĕлнĕ пулсан,
Çула тухман пулăттăм.
Ыр курмасса пĕлнĕ пулсан,
Санран тарнă пулăттăм.

Çурта çунать, çунсах анать,
Çунса пĕтсен, мĕн юлать?
Чĕрем çунать, хыпсах çунать,
Çунса пĕтсен мĕн пулать?

Лакăм-тĕкĕм, çырма-çатра—
Урапи мар, лав тӳнет.
Витри-витри шывне сапсан,
Хăйă мар, кăвайт сӳнет.

Лавне хăвах купаларăн,
Халĕ хăть ăçта тӳнтер.
Кăвайтне хамах сӳнтерĕп —
Пур ман чăтăмлă минтер.

* * *

Шуҫăм ҫути пек
Килтĕн ҫуталса
Каҫ енне сулăннă
Салхуллă пурнăҫа.

Шăпа, хура ҫăхан пек
Хăратса,
Сас пачĕ пуҫ ҫинче
Кăранклатса.

Шăпа пире
Пĕрле пулма ҫырман.
Тĕл пултăмăр!
Епле халь уйрăлан?

* * *

Йăлтăрти куллăма
Парнелетĕп пурне те,
Вăйпитти аллăмпа
Ал тытатăп пурне те.
Эп хастар ҫынсемпе
Хаваспах паллашатăп,
Калаҫатăп, кулатăп,
Юрлатăп, ташлатăп.

Чун-чĕре ăшшине —
Пĕр сана.
Савăшу кăварне
Пăлхатан эс кăна.

* * *

Тĕттĕм каçпа килтĕм—
Эс кĕтме тухмарăн.
Тĕттĕм ирпе кайрăм—
Ăсатса ямарăн.

Пуçăм мар,
Тĕнче пуль
Çаврăнчĕ пуçхĕрлĕ!
Арпашăнса кайрĕç ĕнтĕ
Шухăшсем тем тĕрлĕ.

* * *

Хăлха çакки çĕтрĕ,
Хăлхам çăмăлланчĕ.
Пулнă пĕрлĕх пĕтрĕ,
Шухăш йывăрланчĕ.

Пулнă пĕрлĕх пĕтрĕ,
Шухăш йывăрланчĕ.
Пĕлĕт пек пуçтарăнса,
Чĕрере капланчĕ.

Пĕр хăлха çакки çине
Хĕрхенсе пăхатăп.
Вăл хăраххăн кирлĕ мар,
Атăла ывтатăп.

* * *

Çумăр çапса çунă вăхăтра
Тухрăм утрăм, тусăм, сан патна.
Çумăр çапса çунă вăхăтра
Çумăра каларăм сан ятна.

Хĕвел хĕртсе пăхнă вăхăтра
Утрăм-чупрăм, тусăм, сан патна.
Хĕвел хĕртсе пăхнă вăхăтра
Хĕвеле каларăм сан ятна.

Çӳллĕ тӳпе персе анас çук,
Хĕм хĕвел пăхма пăрахас çук.
Пĕртен-пĕрех савнă тусăма
Асран ярса манса каяс çук.

Манса кайса улшăнас пулсан —
Çумăр, çапса ӳкер çĕр çине.
Манса кайса улшăнас пулсан —
Хĕвел, хĕртсе типĕт сăн-пите.

* * *

Савас килсессĕн те
Савас темен.
Хыпса илсессĕн те
Çунас темен...
Сисмерĕм те,
Хурăн хуппи пек
Хăвăрт çунса кайрăм.

Ӳпкев...
Самантлăх вăйсăрлăхшăн
Чĕремре —
Астăн йышăнайми ӳпкев.
Чунăм, таканлă ăйăр пек,
Хĕм сирпĕтсе таптать
Вăйсăрлăха,
Именчĕклĕ ачашлăха.
Ку кам?!
Ку — эпĕ мар.

Ĕмĕрсенчи аваллăхран,
Ратран рата куçса пырса,
Юнра, пĕр чăмăркка пулса,
Манра харсăрланать, тен,
Ипполита.

* * *

Шухăшларăм: эпĕ саншăн
Кĕрен кĕпе тăхăнсан,
Кĕрен чечек пулас çук.
Кĕрен чечек пулсассăн та,
Куçу умне курнас çук.

Шухăшларăм: эпĕ саншăн
Шурă кĕпе тăхăнсан,
Йăрăс хурăн пулас çук,
Йăрăс хурăн пулсассăн та,
Эс пилĕкрен тытас çук.

Шухăшларăм: эпĕ саншăн
Йăлтăр кĕпе тăхăнсан,
Йăлтăр çăлтăр пулас çук.
Йăлтăр çăлтăр пулсассăн та,
Эс ăмсанса пăхас çук.

Йăлтăр кĕпе йăлтăрти;
Шурă тутăр чăлтăрти.
Кĕрен чечек — аллăмра.
Эсĕ — манăн çумăмра.

* * *

Ҫала, мĕн-ма-ха суйрăн,
Мĕн-ма-ха улталарăн,
Савмасăрах епле-ха
«Савап» тесе каларăн?

Шур Атăл хумĕ ăмăр,
Чунра ытла та тăвăр.
Хумсен ҫилхийĕ шурă,
Путса вилеп. Эй, турă!

Вăрманалла утатăп,
Ҫăка хулли касатăп.
Шăхличĕм, шăхăртса юрла,
Ăна эс шахвăртса кала:

«Тусăм, мĕн-ма-ха суйрăн,
Мĕн-ма-ха улталарăн?
Савмасăрах епле-ха
«Савап» тесе каларăн?»

Шур Атăл хумĕ ăмăр,
Чунра ытла та тăвăр.
Хумсен ҫилхийĕ шурă,
Пурнас килет. Эй, турă!

* * *

Кӗрхи кунӗ питӗ сивӗ,
Ăçта кайса кӗрес-ши?
Хуркайăксем вӗçсе кайрӗç,
Кунти сивве чăтаймарӗç.
Манăн епле чăтас-ши?

Ан кай, ан кай тесессӗн те,
Вăхăт çитсен каятăп.
Çавă сехет çапмасăрах
Каях тесе ан кала.
Пӗрре кайма пуçтарăнсан,
Эс пӳлеймӗн çав çула.

Пӗррехинче, пӗр ирхине
Ăшă кунсем килӗç-ха.
Эп юрлани-кулнине те
Пайтах асилтерӗç-ха.

* * *

Аякри çула эп тухрăм.
Утрăм, утрăм.
Кĕперсĕр юханшыв
Хĕррине тухрăм.
Шывĕ пăтранать, шавлать,
Авăр тĕлне кăтартать.
Эс парнеленĕ тутăра
Вĕлл! вĕлкĕштертĕм те...
Ятна каларăм çеç —
Тутăр парăслă кимĕ
Пулчĕ тăчĕ.

Инçе çулра эп
Çичĕ çĕр те каçрăм.
Хампала хам,
Тĕл пуланпа калаçрăм.
Кайсан-кайсан
Татах та çичçĕр çухрăм—
Чашкăракан пушар патне те
Çитсе тухрăм.
Çулăм улать,
Вĕри аллисемпе хăлаçланать.
Эс парнеленĕ тутăра
Вĕлл! вĕлкĕштертĕм те...
Ятна каларăм çеç —
Умри сукмак çине
Ислетсе çумăр çурĕ.

Часах
Ман ума тухрĕç улăпсем—
Шурă калпаклă сăрт-тусем.
Çӳлтен аялалла
Пăхмаççĕ те вĕсем.
Мăнаçлă!

Эс парнеленĕ тутăра
Вĕлл! вĕлкĕштертĕм те...
Ятна каларăм çеç —
Вĕçен кавир çинчен
Ытарайми тĕнче илемĕпе
Килентĕм кунĕпе те çĕрĕпе.

Эй, пурнăç çулĕ,
Эс ытла кăра.
Çĕтертĕм-çке
Асамлă тутăра.
Ман пурччĕ пĕр юмах,
Те чăнччĕ-ши, те тĕлĕк?
Ĕненмесен те ĕненеп.
Пулнах, пулнах вăл...
Ĕлĕк.

* * *

Çилĕ вĕрет, шывĕ юхать.
Мĕн пулăшать çиле, шыва
Е майĕпен, е васкаса,
Çулне пĕлсе çула тухма?

Ачашлăхăн ачашланас килет.
Ачашланас килет
Мăшăр ачашлăхпа.
Мĕн систерет чуна
Ҫам пире ют, кам çывăх?

Ăшă-çке.
Аллăм пăр пек сивĕ.
Ирментĕм тĕкĕнме ална.
Именни çеç те мар,
Туятăп,
Санран эп сивĕнсе юлатăп.
Ăшăнаймасăр,
Ачашлăха
Ачашлантараймасăр.

* * *

Тӗлпулусем, уйрӑлусем —
Ҫӑткӑс тӗнчен пулӑмӗсем.
Ҫур кунӗ пек ҫиҫсе кулаҫҫӗ,
Ҫӗр кунӗ пек йӗрсе пӑхаҫҫӗ.
Ҫуҫран — чуна ҫӳҫентерсе.

Тӗлпулусем, уйрӑлусем,
Телей патшин хуралҫисем.
Самант ҫитет — тӗл пултаратӑр,
Самант иртет те — уйӑратӑр.

Санпа тӗл пулӑттӑм халех,
Темскер пире тӗл пултармасть.
Апла пулсан, апла пулсан —
Пӗрле пулмашкӑн юрамасть.

Тек хирӗҫместӗп. Тем пулсан та,
Тӗнчен хӑйӗн саккунӗ пур.
Ҫуркуннепе тӗсне ҫухатрӗ
Ҫап-ҫутӑ пулнӑ шурӑ юр.

Ҫаллех кӑвайт. Хӗлхем вӗҫет.
Ҫуҫӑмсенче ҫиҫсе илет.
Хӗлхем! — пӗр юрӑ хыванать,
Хӗлхем! — пӗр сӑвӑ ҫырӑнать.

Эп каҫару ыйтап юратуран,
Пӗрремӗш, юлашки тӗлпулуран,
Уйрӑлуран, кӗлленнӗ кӑвайтран.

## ТУПМАЛЛИ

ШАНАРЛАННА ХУНАВ . . . . . 4
СӐННЕ ҪАВАЙТ АШШИ . . . 28

**Светлана Азамат**
**(Светлана Васильевна Смирнова)**

**ТЕПЛЫЙ ВЕТЕР**

Стихи

На чувашском языке

Редактор **П. Е. Димитриев**
Художник **В. В. Гурин**
Художественный редактор **М. Д. Давлятшин**
Технический редактор **Л. К. Егорова**
Ҫорректор **Р. П. Кудряшова**

**ИБ 2514**

Сдано в набор 26.10.90 г. Подписано к печати 07.05.91 г. Формат 70×90¹/₃₂. Бумага офс. № 2 кн.-журн. Гарнитура литературная. Печать высокая. Усл. печ. л. 2,34. Усл. кр.-отт. 2,48. Учетно-изд. л. 2,04. Тираж 2000 экз. Заказ № 2965. Изд. № 20. Цена 60 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000, Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской ССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли,
428019, Чебоксары, пр. Ивана Яковлева, 15.

60 пус

ЧĂВАШ
КĔНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ